**Çӳлти сывлав çулĕсем шыççан пăспа сывлани /ингаляци/ уйрăмах витĕмлĕ пулăшать.**

**Сиплев йĕрки**

Хуппипех ярса пĕçернĕ вĕрекен çĕр улми шывне 1-ер апат кашăкĕ эмел курăкĕн /ромашка/ чечекне, сар çип ути курăкне /зверобой/, чапăр курăкне /чабрец/ ярса 2-3 минут вĕретмелле те çулăм çинчен илмелле.

Кастрюль умне меллĕ вырнаçса лармалла, ун çинелле ӳпĕнмелле, пуç урлă ал шăллипе витĕнмелле, куçа хупмалла. Пăсĕпе сунас чухне - сăмсапа, пыр ыратсан, ӳсĕрттерсен çăварпа сывламалла. Хушăран сывлама çăмăлрах пултăр тесе ал шăллине кăштах çĕклесе илме юрать.

Ингаляци хыççăн, пăс сивĕнсен, вăтамран 10-15 минутран, пите сивĕрех шывпа чӳхемелле, шăлса типĕтмелле те нӳретекен крем сĕрмелле. Кунне 2-3 процедура ирттерсен чире хăвăрт çĕнтерме пулать. Ингаляци хыççăн сахалран та çур сехет урама тухмалла мар.

**Ангина**

Пыра çĕр улми пăсĕпе кăна та, эмел курăкĕн чечекĕ, пĕтнĕк, хаяр ути /шалфей/ янă шывпа та сиплеме пулать. Çĕр улми пĕçернĕ чухне курăксен пуххине хушса е ăна вĕрекен ахаль шыва ярса пăсне 10-15 минут çăварпа сывламалла.

**Грипп**

- Тин вĕренĕ 1 стакан шыва 1 чей кашăкĕ сода ярса пăсланма пăрахичченех сывламалла.

- Суханпа ыхрана вĕтетмелле, стакана е тарăн чашăка хумалла, çăвар патне тытса шăршипе 1-2 минут сывламалла. Тепĕр процедура валли çĕнĕрен вакланă суханпа ыхра кирлĕ.
- Шурă чăрăш /пихта/ çăвĕпе ингаляци туни витĕмлĕ. Эмальленĕ кастрюльти вĕри шыва ăна 3-4 тумлам ямалла. Пăсĕпе 10-15 минут сывламалла. Ингаляци хыççăн шурă чăрăш çăвĕпе кăкăра сăтăрмалла та ăшă витĕнсе выртмалла.
- Сунас аптратсан вĕри шывлă кастрюле чĕрĕк стакан пан улми уксусĕ ярса пăсĕпе сывламалла.

**Гайморит**

Тин вĕренĕ шыва типĕ ментол ярса ирĕлтермелле. Пуç урлă ал шăллипе витĕнсе сăмсапа пăсланма пăрахиччен сывламалла.

**Бронхит**

60 грамм прополиспа 40 грамм пыл карасне пĕчĕк кастрюле хумалла, ăна вĕрекен шывлă пысăкрах кастрюле лартмалла. Прополиспа карас ирĕлнĕ май сиплĕ пăс тухать. Унпа ирхине тата каçхине 15-шер минут сывламалла.

**Алина Лукиянова. Газета «Сывлăх». 2013. 31 января.**